25-мĕш çул тухать: Хакĕ 20 пус

1943
ЯНВАРЬ
7
КĔÇНЕРНИКУН
5(6242) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнине производствăри çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илер

Малта пыракан 172-мĕш номерлĕ заводăн коллективĕ Совет Союзĕнчи мĕнпур рабочисемпе работницăсене, пĕтĕм ĕçсыннисене пирĕн тăван Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнине производствăри çĕнĕ çитĕнӳсемпе, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн хумне татах та ытларах вăйлатнипе кĕтсе илме чĕнчĕ. Çак чĕнӳ çине, паллах, пирĕн фабрикăсемпе заводсенчи, колхоз уйхирĕсенчи совет патриочĕсем фронта пулăшассине татах та ытларах вăйлатнипе, производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе ответлĕç.

Пирĕн Хĕрлĕ Çарăн тивĕçлĕхĕ совет халăхĕ умĕнче питех те пысăк. Геройла Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ хăйсем 25 çул тултарнине отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенчи хаяр çапăçусенче, ирсĕр нимĕç оккупанчĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешсе кĕтсе илеççĕ. Хăй çуралнă малтанхи кунсенчен пуçласах, тăван Хĕрлĕ Çар пирĕн аслă çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне, совет халăхĕн интересĕсене çирĕппĕн хӳтĕлесе тăрать. Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсем хăйсен боевой кунçулне мĕнпур белогвардеецсен кĕтĕвĕсемпе ютçĕршыв интервенчĕсен çарĕсене çапса аркатнинчен пуçларĕç. Тăван çĕршывăн хăвачĕ ӳснĕ май çулран-çул вăй пухса пычĕç, пирĕн çĕршывăн тăшманĕсемшĕн аça-çиçĕм пулса тăчĕç.

Хĕрлĕ Çар çирĕп хӳтĕлесе тăнипе эпир хамăрăн çĕршыва индустриализацилерĕмĕр, çĕршывăн пур кĕтесĕсенче те хăватлă фабрикăсемпе заводсем туса лартрăмăр. Пирĕн социализмлă индустри вара хăй енчен Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне кучухнехи малта пыракан техникăпа, чи паха хĕçпăшалсемпе хĕçпăшаллантарса пычĕ. Хĕрлĕ Çарăн хӳттинче пирĕн колхозсем ӳссе чечекленчĕç, колхозниксем пуян та культурăллă пурăнма тытăнчĕç. Халĕ ĕнтĕ, отечественнăй вăрçă кунĕсенче, пирĕн колхозниксем тăван Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те—апат-çимĕçсем, сĕт-çу, аш-какай, тумтирсем парса тăраççĕ, хăйсем перекетленĕ укçа-тенкĕсене Хĕрлĕ Çара татах та вăйлăнрах хĕçпăшаллантарнă çĕре параççĕ.

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар хамăрăн совет халăхĕ умĕнче кăна мар, пĕтĕм тĕнче умĕнче, мĕнпур прогрессивнăй этемлĕх умĕнче чапа тухрĕ. Мĕншĕн тесен Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсем пĕтĕм тĕнчене, тĕнчери демократие гитлерла чумаран хӳтĕлеççĕ. Хĕрлĕ Çар отечественнăй вăрçă фрончĕсенче тăвакан геройла ĕç вăл—мĕнпур малта пыракан прогрессивнăй этемлĕхĕн ĕçĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ Хĕрлĕ Çарăн фронтри мухтавлă çĕнтерĕвĕсем çине пăхса пĕтĕм тĕнче тĕлĕнсе савăнать. Гитлерла пусмăр айĕнче асапланакан халăхсемпе çĕршывсем Хĕрлĕ Çар çине хăйсен çăлăнăçĕ çине, хăйсен шанчăкĕ çине пăхнă пек пăхаççĕ. Хĕрлĕ Çар пулăшнипе вĕсем фашистла чуралăхран тухма ĕмĕтленеççĕ.

Совет халăхĕ хăйĕн тăван çарне юратнине фронтшăн пĕтĕм вăя хурса ĕçленипе, паттăр воинсем валли пур тĕрлĕ хĕçпăшалсем те—самолетсем, танксем, тупăсем, винтовкăсем, боеприпассем, тумтирсем, апат-çимĕçсем çителĕклĕ таран тата татти-сыпписĕр парса тăнипе кăтартса парать. Хĕрлĕ Çар ретĕнче кашни совет гражданинĕн тăванĕ, пиччĕшĕ е шăллĕ тăрать. Ытти мĕнпур халăхсен ывăлĕсем пекех, чăваш халăхĕн ывăлĕсем те хамăрăн инçетри тылра тăракан тăван республикăна вăрçă фрончĕсенче тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçса хӳтĕлеççĕ. Çавăнпа та чăваш халăхĕ хăйĕн фронтри ывăлĕсемшĕн çине тăрса тăрăшать. Çакна вăл фабрикăсемпе заводсенче, колхоз уйхирĕсенче çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кăтартса парать. Юлашки вăхăтра танксен колоннисене тума 40 миллион тенкĕ укçа пухни те çав пысăк юратăва кăтартса паракан тĕслĕх пулса тăрать. Пăрачкав районĕнчи «Красный пахарь» колхоз председателĕ М. В. Дубровин юлташ хăйĕн ывăлĕ-летчик валли самолет сутăн илме 100 пин тенкĕ укçа пани, Улатăр районĕнчи «Красный луч» колхоз членĕ 58 çулхи А. М. Сарсков колхозник пирĕн земляк—Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Н. Орлов валли самолет тума хăй укçипе заказ пани тата ытти нумай колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен фронтри ывăлĕсем валли танксемпе самолетсем тума укçа хывни—колхозниксен иксĕлми вăй-хăватне, вĕсен патриотла аслă туйăмне, вĕсем çĕнтерӳ тăвассишĕн нимĕн те хĕрхенсе тăманнине кăтартса параççĕ. Çак патриотла движени кунран-кун ӳссе, татах та ытларах вăйланса пырать.

Нимĕçсен войскисене Сталинград патĕнче çавăрса илсе аркатса тăкас тĕлĕшпе пирĕн хĕçпăшаллă вăйсен Верховнăй Главнокомандованийĕ тунă плана паттăр воинсем ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыни, Хĕрлĕ Çар çак çĕнĕ çула чылай совет хулисемпе ялĕсене ирĕке кăларнипе кĕтсе илни, пирĕн войскăсем Дон шывĕн кукринче, Çурçĕр Кавказра, Центральнăй фронтра вăйлăн наступлени туса пыни, вĕсем кунран-кун çĕнĕ хуласемпе ялсене ирĕке кăларни пирĕн ĕçсыннисене тылра татах та пысăкрах çитĕнӳсем тума хавхалантарать. Совет халăхĕн ĕçри хастарлăхĕ темиçе хут ӳсрĕ. Паллах, вăл хăйĕн геройла ывăлĕ—Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнине пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илме тăрăшать.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва татах та ытларах вăйлантарас шутпа фабрикăсемпе заводсен коллективĕсем, колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар кунне кĕтсе илнĕ май хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илĕç.

Пирĕн халĕ Хĕрлĕ Çар умĕнче парăмсем те пур-ха. Çак парăм вăл чи малтан—пирĕн республикăри уйрăм районсем авăн çапса пĕтерменни, государство умĕнчи обязательствăсене парса татманни пулса тăрать. Пирĕн республикăра халĕ 16 пин гектар çинчи тырпула çапса пĕтермен. Государствăна тырпул памалли плана республика 83 процент кăна тултарнă. Çак тĕлĕшпе Чкаловски, Комсомольски, Елчĕк, Октябрьски, Пăрачкав районĕсем уйрăмах парăмлă пулса тăраççĕ. Çак парăма çитес кунсенчех татмалла, пирĕн ĕçри мĕнпур çитменлĕхсене пĕтермелле.

Колхозсен, колхозниксемпе колхозницăсен çитес çуракине тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илмелле. Вăрлăх фончĕсене кирлĕ таран пĕтĕмĕшпех хывса хăварас пулать, вăрлăхсен пахалăхĕсене тĕрĕслесе тухас пулать, таса мар вăрлăхсене тасатмалла, сортламалла. МТС-семпе МТМ-сен тракторсене тата вĕсем çумне кăкарса ĕçлемелли ытти машинăсемпе инвентарьсене вăрçă вăхăтĕнчи хăвăртлăхпа, пысăк пахалăхпа юсамалла. Килес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешсе, колхозниксен уя ытларах удобренисем кăларассишĕн тăрăшмалла, ку тĕлĕшпе пуçласа янă уйăхлăха ăнăçлăн ирттермелле, хĕллехи вăхăтпа усă курса, агротехникăна тĕплĕн вĕренмелле.

Республикăри предприятисен фронт валли пур йышши продукцисене те кирлĕ таран, пирĕн паттăр фронтовиксем ыйтнă пек парса тăмалла. Перекетлесе хăварнă энергипе материалсенчен, чĕр таварсенчен планран ирттерсе продукци туса кăлармалла. Перекетлесе хăварнă ĕç вăхăчĕпе усă курса, фронтовиксене çĕнĕрен хĕçпăшалсем, боеприпассем тата ытти тĕрлĕ продукцисем туса памалла. Чугунçул транспорчĕн çав продукцисене фронта вăхăтра çитерсе тăрассишĕн кĕрешмелле.

Хĕрлĕ Çар ячĕпе, пулас аслă çĕнтерӳ ячĕпе социализмлă ăмăртăвăн хумне татах та çӳлерех çĕклер!

Чăваш АССР-ĕнчи Пăрачкав районĕнчи „Трактор“ колхоз

Колхоз председательне Николай Степанович КАШЕЧКИН юлташа

Спасибо Сире, Николай Степанович, Хĕрлĕ Çарăн бронетанковăй вăйĕсемшĕн тăрăшнăшăн.

Манран салам йышăнăр.

И. СТАЛИН.

Чăваш АССР-ĕнчи Çĕмĕрле районĕнчи Егоркино ялсоветĕнчи „Большевик“ колхоз

Колхознике Василий Герасимович КОЛОЧКОВА

Спасибо Сире, Василий Герасимович, Хĕрлĕ Çарăн бронетанковăй вăйĕсемшĕн тăрăшнăшăн.

Манран салам йышăнăр.

И. СТАЛИН.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Сталинградран Кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн войскăсем тытса илнĕ трофейăсем тата противникăн çухатăвĕсем

1943-мĕш çулхи январĕн 1-мĕшĕпе 5-мĕшĕ хушшинче Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăралларахра нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пынă çапăçусенче пирĕн войскăсем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: самолетсем — 27, танксем—56, пулеметсем — 429, минометсем — 267, противотанковăй пăшалсем — 1.016, автоматсем — 10.000, винтовкăсем — 15.770, снарядсем — 3 миллион ытла, патронсем — 20 миллион ытла, авиабомбăсем 500.000, радиостанцисем — 83, боеприпассемпе предовольстви турттарса пыракан 239 автомашина, лавсем—3.217, çар грузĕсем тиенĕ лавсем—4.400, паровозсем—18, вагонсем — 400, тĕрлĕ складсем — 37.

6.500 салтакпа офицера тыткăна илнĕ, 1942 çулхи ноябрĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа мĕнпурĕ противникăн 144.150 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

1943 çулхи январĕн 1-мĕшĕпе 5-мĕшĕ хушшинче çакăн чухлĕ пĕтерсе тăкнă: самолетсем — 88, танксем — 1 18, тĕрлĕ калибрлă орудисем — 122, минометсем — 291, пулеметсем — 787, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан автомашинăсем — 570, мотоциклсем — 340, вагонсем — 432, тĕрлĕ складсем — 20.

1943 çулхи январĕн 1-мĕшĕпе 5-мĕшĕ хушшинче противникăн, вилнисене кăна шутласан та, 20.000 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 5-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 5-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Дон** шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра, **Сталинградран** кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăралларахра, **Центральнăй** фронтра тата **Çурçĕр Кавказра** малтанхи енеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Пирĕн войскăсем **Нальчик** хулипе чугунçул станцине, **Прохладный** хулипе чугунçул узелне, **Майское** хулине тата **Котляревская** ятлă чугунçул узелне, **Морозовский** хулипе чугунçул станцине тата **Цымлянская** ятлă район центрне тытса илнĕ.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн снайперсемпе разведчиксем 100 гитлеровецна ытла пĕтерсе тăкнă. Сталинградран хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем икĕ паха высотăшăн вăйлăн çапăçнă. Артиллерин вут-çулăмĕпе хӳтĕленсе, пирĕн боецсем противник тăракан вырăна çĕмĕрсе кĕрсе кайнă та 20 окоппа блиндажа йышăнса илнĕ. 4 оруди, 16 пулемет, 13 винтовка тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Сталинград районĕнче пĕр кун хушшинче нимĕçсен 9 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăралларахра пирĕн войскăсем наступлени туса пынă. Пĕр меллĕ рубеж патĕнче хаяр çапăçу пулса иртнĕ. Гитлеровецсем, хăйсен позицийĕсене хăйсен аллинчех хăварас тесе, çапăçăва чылай пысăк вăйсем кĕртсе янă. Совет артиллеристчĕсем, усă позицисенчен персе, противник хирĕç тăнине пусарса лартнă, пирĕн пехотăна çул уçса панă. Пирĕн боецсем нимĕçсем тăракан вырăна вăркăнса кĕрсе кайса, нимĕçсене каялла чакарнă. Трофейăсем тытса илнĕ; трофейăсем хушшинче 11 оруди, 7 миномет, 28 пулемет тата боеприпассен склачĕ пур. Сталинградран кăнтăралларахра пирĕн подразделенисем, каялла чакакан противника хăваласа пырса, нимĕç пехотин батальонне çапса аркатнă.

* * *

Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем, ăнăçлăн наступлени туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Пĕр участокра Н-ски чаçăн боецĕсем тăшманăн çавăрса илнĕ гарнизонне, хирĕç тăнăскере, вĕлерсе пĕтернĕ. Нимĕçсен авиапехотнăй дивизийĕнчи салтаксене, çав шутра полк командирне, тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн стрелковăй чаçсем штурмласа Морозовский хулипе пысăк чугунçул станцине тытса илнĕ. Тыткăна илнĕ тата трофейăсем нумай тытса илнĕ, трофейăсене халь шута илеççĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем хăйсен рубежĕсене тĕреклетнĕ, уйрăм участоксенче наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Великие Луки хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре противникăн пехоти танксем пулăшнипе пирĕн позицисене атакăлама хăтланнă. Гитлеровецсен пур атакисене те сирсе янă, противника пысăк çухатусем тӳстернĕ. Кӳршĕри участокра Стариков юлташ ертсе пыракан подразделени нимĕçсен 19 автомашинине, пĕр орудине, боеприпассен складне тата 25 лашине тытса илнĕ. Пирĕн боецсем пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе нимĕçсен 2 самолетне ӳкернĕ.

* * *

Çурçĕр Кавказра пирĕн войскăсем, ăнăçлăн наступлени туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Нальчик патĕнче вăйлă çапăçусем пынă. Нимĕçсем хула тавра темиçе рет хăватлă инженерла сооруженисем туса тухнă тата хула патне пымалли вырăнсене минăсем хурса тухнă. Пирĕн боецсем артиллерипе танксем пулăшнипе пур чăрмавсене те сирсе янă та çĕрле хулана вăркăнса кĕрсе кайнă, вăйлăн атакăланă хыççăн кăна вара тытса илнĕ.

Нальчик патĕнче тата хула урамĕсенче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсен темиçе çĕр вилли выртса юлнă. Тепĕр участокра пирĕн войскăсем Прохладный хулине хĕвелтухăçпа кăнтăр енчен вăркăнса кĕрсе кайнă та хаяррăн çапăçнă хыççăн çав хулана нимĕçсенчен тасатнă. Тулли мар даннăйсем тăрăх 25 танкпа бронемашина, 27 оруди, 37 пулемет, 1000 винтовка, 63 автомашина тата 6 склада тытса илнĕ. Трофейăсене шута илеççĕ.

* * *

Минск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ 10 кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен икĕ гарнизонне пĕтерсе тăкнă тата противникăн 4 поездне ӳпĕнтерсе янă, 4 паровоз тата 28 вагон çĕмĕрлĕнĕ. Оккупантсемпе кĕрешсе тата поездсене крушенисем туса пирĕннисем нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Пĕр радиостанци, 7 пулемет, 120 винтовка тата темиçе пин патрон тытса илнĕ.

* * *

Аялалрахра нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Орджоникидзе крайĕнчи Ленински поселокра тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Гитлерла бандитсем пирĕн колхоза тата пирĕн поселокри çынсене çаратса пĕтерчĕç. Нимĕçсем Новиков колхозникрен унăн ĕнине, пăрушне, 5 сурăхне туртса илчĕç; Ракова колхозницăн 4 сурăхне тата пăрушне пусрĕç. Çаратусăсем пурĕ 3.000 сурăха, 300 пуç мăйракаллă шултăра выльăха тата кильти кайăккĕшĕке нумай пусса пĕтерчĕç е хăваласа кайрĕç. Нимĕçсем нумай колхозниксенчен хаклă япаласене туртса илчĕç тата килти япаласене ватса-çĕмĕрсе пĕтерчĕç. Гитлеровецсем колхоз фермине, колхоз витине тата ытти общественнăллă çурт-хуралтăсене пĕтерсе тăкрĕç. Фашистсем халăха тискеррĕн тыткаларĕç, колхозниксене хĕнетчĕç, мирлĕ çынсене тем тери мăшкăллатчĕç». Акта А. Новикова, Н. Черных, А. Ракова, М. Новикова колхозницăсем алă пуснă.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çар валли çĕнĕ уйрăмлăх знакĕсем тăвасси çинчен

1. Оборона Халăх Комиссариачĕ ыйтнине пурнăçа кĕртсе, Хĕрлĕ Çарăн личнăй составĕ валли хальхи уйрăмлăх знакĕсем вырăнне çĕнĕ знаксем — погонсем тăвас.
2. Хĕрлĕ Çарăн личнăй составĕн çĕнĕ уйрăмлăх знакĕсен образецĕсене тата вĕсене çырса кăтартнине çирĕплетес.
3. Оборона Халăх Комиссариатне çĕнĕ уйрăмлăх знакĕсене ĕçе кĕртмелли срокĕсене палăртма хушас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1943 çулхи январĕн 6-мĕшĕ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Çурçĕр Кавказ, Моздок районĕ). Ӳкерчĕк çинче: Старши сержант Худовердов командир пулса ертсе пыракан подразделенири красноармеецсем халăх пурăнакан М. пункта пӳртсенчен перекен гитлеровецсенчен тасатаççĕ.

В. ИВАНОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Пирĕн земляксем

Унăн ĕçĕ мухтава тивĕç

Июль çилĕ лăпкăн-лăпкăн вĕрнĕ, тӳперен хĕвел пĕçертнĕ. Гитлерла Германи пирĕн мирлĕ пурнăç çине сĕмсĕррĕн вăрçăпа тапăннăранпа пĕр уйăх иртнĕ.

Çак вăхăтра Лаврентий Григорьева тăван ялĕнчи çыннисем фронта ăсатма пухăннă. Унччен вăл, пĕр çемьери пек, хăйĕн бригадинчи колхозниксене лайăх ертсе пынă. Ултă çул бригадирта ĕçленĕ колхозника вĕсем юратнă. Аса илнĕ вĕсем лайăх ĕçленĕшĕн ăна премисем панисене. Аса илнĕ вăрçă пуçланнă кунсенче вăл çĕнтерӳшĕн ĕçлеме хушнине. Аса илнĕ те вĕсем ăна наказ панă:

— Ну, Лаврентий, тăшмана çĕнтерсе таврăн!

— Таврăнатăп çĕнтерсе!.

Лаврентий çула тухнă. Советски районри Васкассинчи Ильич ячĕпе тăракан колхозри 2-мĕш бригада членĕсем хăйсен ĕçри юратнă командирне инçетри фронта ăсатнă.

Вăрçă. Ăна Григорьевăн хăйĕн кулленхи пурнăçĕнче курмалла пулнă. Патвар шăм-шак, çивĕч куç, пултарулăх, хăрама пĕлменни,—çаксем тăшмана çĕнтерме çирĕп шанчăк панă. Тăван çĕршыв тăшмана пĕтерме ăна хĕçпăшал пилленĕ.

...Çапăçу ирхине-ирех, хĕвел вăрман хыçĕнчен тӳпене çĕклениччен, пуçланнă. Нимĕç тупăпа минометсенчен, автоматсенчен вĕçĕмех персе тăнă. Анчах пирĕн боецсем контратакăсем тăва-тăва вĕсен наступленине сирсе янă. Тăшман чееленсе хăтланнă пулсан та, пирĕн боецсем вĕсен ретне сайралатнă. Акă кĕçех атака пуçланса кайнă. Штык вĕççĕн тăрса çапăçнă. Çакăн чух Григорьев вунă нимĕçе ытла штыкпа чиксе пăрахать. Вăл виçĕ хутчен пулнă хĕрӳллĕ çапăçура кăна нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Малтанхи çапăçура çăмăллăн аманнă, çапах та суранĕ кĕçех тӳрленсе çитнĕ. Вăл каллех фронтра.

Каллех çапăçăва. Кунĕпе пынă çапăçура хăйĕн пăшалĕнчен персе Григорьев офицерсене, гансене «леш тĕнчене» нумай ăсатнă. Анчах, сасартăк, вăл хăйĕн те ӳт-пĕвĕ пĕçерсе кайнине туйнă. Унччен те пулман:—Русс, сдавайся!—тесе кăшкăрни илтĕннĕ. Мĕн тумалла? Нимĕç тыткăна илесшĕн. Юн кайнипе вăй-хал чакнине пула хирĕç тăма та йывăр пулнă. Кайран мĕн пулнине астумасть. Тăна кĕрсе вăл вăраннă. Халĕ вăл çемçе курăк çийĕнче выртнă. «Нимĕçсем, вилнĕ тесе, пăрахса хăварнă ĕнтĕ»,—шутласа илнĕ вăл хăй ăшĕнче.

Инçетре-инçетре орудисенчен пени аслати авăтнă пек кĕрлесе тăнă. Григорьев часах малтан курнă йывăççене астуса илнĕ. Кас çывхарнă, йывăç мĕлкисем вăрăмланса пынă. 8 талăк нимĕçсен тылĕнче выçăллă-тутăллă пурăннă хыççăн, умри йывăрлăхсене çĕнтерсе, вăл хамăр чаçсем вырнаçнă çĕре çитсе тухать.

Ку суранĕ тӳрленсе çитнĕ хыççăн Григорьев сывалса каллех мухтавлă фронтовиксен ретне тăрать. Халĕ вăл Ленин хулине геройла хӳтĕленĕ çĕрте связист пулса çапăçать.

Григорьев юлташ тăван колхозникĕсемпе çемьипе çыхăну тытса тăрать. «Эсир пĕлетĕр-и: нимĕç совет çыннисене çака-çака вĕлерет, кил-çурчĕсене çунтара-çунтара ярать, япали-мĕнĕсене çарата-çарата илсе каять, выльăх-чĕрлĕхĕсене пуса-пуса çиет. Эсир çакна ăнланатăр пулсан, тискер нимĕçе пĕтерсе тăкма пире, фронтовиксене, пулăшăр»,—тесе çырать вăл, тăван ял-йышĕсен, арăмĕпе ачи-пăчисен, ашшĕ-амăшĕсен пурнăçне инçетри фронтра хӳтĕлекенсенчен пĕри.

Германи захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн Лаврентий Григорьева Правительство наградине панă.

ЯКОВ СИГАЙ,
М. СТЕПАНОВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине пани

Январĕн 5-мĕшĕнче Шупашкарти Хĕрлĕ Çар суртĕнче Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ красноармеецсен художествăллă пултарулăхне кăтартнă çĕре хутшăннă çынсемпе коллективсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине пачĕ.

Художествăллă пултарулăх тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн, çак ĕçре творчествăллă пултарулăх кăтартнăшăн тата республикăри çар чаçĕсемпе гражданла халăх хушшинче лайăх ĕçленĕшĕн Хисеплĕ грамотăна красноармеецсем Л. В. Веденский, В. И. Гончаренко, В. А. Дорягин, Н. А. Долгополов, А. Д. Иванов, А. М. Ионов, Н. А. Копалкин, Л. С. Корнеев, М. В. Малыгин, А. Ф. Медведь тата ытти юлташсем илчĕç.

Красноармеец А. М. Ионов юлташ, хисеплĕ грамотăна илсе, çапла каларĕ:

— Пирĕн ĕçе те паллă тумасăр хăварманшăн, пире çакăн пек награда панăшăн эпĕ Чăваш правительствине чĕререн тав тăватăп тата малашне каличченхинчен те пултаруллăрах ĕçлеме сăмах паратăп,—терĕ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине çавăн пекех старши сержант Н. С. Буховецкий, командир Н. Н. Волков, старшина М. Б. Вольфман, кĕçĕн воентехник А. М. Косцов-Арский, курсант М. Н. Новикова, А. И. Залуговская юлташсем илчĕç.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн 1942 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Хисеплĕ грамотăна тата Хĕрлĕ Çар чаçĕсемпе халăх хушшинче красноармеецсен художествăллă пултарулăхне кăтартас тĕлĕшпе лайăх ĕçлекен 3 коллектива пачĕç.

Награда илнĕ красноармеецсен, командирсен тата уйрăм коллективсен ячĕпе подполковник Баркан юлташ сăмах каларĕ. Вăл, красноармеецсен художествăллă пултарулăх коллективĕсем юлашки çулталăк хушшинче тунă ĕçсемпе çитĕнӳсем çинче чарăнса тăрса, вĕсен малашнехи задачисене палăртса хăварчĕ.

— Художествăллă пултарулăха кăтартакансен тĕп задачи,—тет подполковник Баркан юлташ,—хăюллă та шиксĕр боецсене пăхса ӳстерме пулăшасси, вĕсене тăшмана курайми пулма вĕрентесси тата Хĕрлĕ Çарпа халăх хушшинчи çыхăнăва çирĕплетесси пулса тăрать.

Çак задачăсене пурнăça кĕртессишĕн красноармеецсен художествăллă пултарулăх коллективĕсем малашне татах та тимлĕнрех ĕçлĕç тесе шантарчĕ Баркан юлташ Чăваш правительствине.

Хисеплĕ грамотăна парса пĕтернĕ хыççăн Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ сăмах каларĕ. З. А. Андреева юлташ награда илнисене Чăваш правительстви ячĕпе саламларĕ тата малашне çĕнĕ çитĕнӳсем тума сĕнчĕ.

Консультаци

Çимелли çĕрулмин тăррисене лартма нумайрах касса хатĕрлер

1. ÇĔРУЛМИН ТУХĂÇЛĂХНЕ ÜСТЕРЕР

Çĕрулми çынсен апат-çимĕçĕнче, спирт тăвакан тата крахмалпа патока тăвакан промышленноçра мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăни пуриншĕн те паллă. Çĕрулми мĕн чухлĕ нумайрах туса илетпĕр, çавăн чухлĕ пирĕн фронтпа тыла апат-çимĕç продукчĕсем ытларах пама пулать.

1942 çулта пирĕн Союзри облаçсемпе крайсенче çĕрулми лартса тумалли çĕр лаптăкĕ чылай ÿсрĕ. Колхозсемпе совхозсем, предприятисемпе учрежденисен подсобнăй хуçалăхĕсем тата рабочисемпе служащисем те хăйсен пахчисемпе коллективлă участокĕсенче çĕрулмине ытларах лартса ÿстерчĕç.

1943 çулта çĕрулми лартмалли çĕр лаптăкĕ татах та пысăкланмалла. Çĕрулмин тухăçлăхне ÿстерессишĕн тата вăйларах кĕрешмелле. Участоксене лайăх сухаласа тĕрлĕрен удобренисемпе çăмçетнисĕр пуçне, тата лартма лайăх вăрлăх хатĕрлемелле: вĕтелсе каймал, хăйĕн пахалăхне сухатман çĕрулми, сывă, чир-чĕртен таса çĕрулми лартмалла. Çĕрулми пысăк тухăçлă пуласси чи малтан вăрлăхăн пахалăхĕнчен килнине яланах асра тытмалла.

Шултăрарах вăрлăх лартсан çĕрулми лайăхрах пулнине пурте пĕлеççĕ. Анчах та шултăра çĕрулмисене, тĕслĕхрен 150—200 грамм туртаканнисене, лартма хуçалăхшăн тупăшлă мар. Вăл лартнă çĕре нумай каять. Ăна куçăн-куçăн касса лартсан та вăл, йывăрĕш енчен илсен, гектар пуçне вĕтĕрех çĕрулми лартнинчен нумайрах каять. Çавăнпа та чи шултăра (150—200 грамм туртакан) çĕрулмисе, вăл питĕ тухăçлă ÿсмĕ пултарать пулсан та, вăрлăхра мар, апат-çимĕçре тата промышленноçра усă кураççĕ. Лартнă çĕре 30—50—70-шер грамм туртакан вĕтĕрех çĕрулми каять.

Анчах çимĕçе е промышленноçа каякан лайăх, шултăра çĕрулмине вăрлăх вырăнне те усă курмалла: вăрлăх валли çав çĕрулмин тăррисене касса илес пулать. 1942 çулта нумай колхозсем çĕрулми тăррисене лартса пысăк тухăçлă çĕрулми ÿстерчĕç. Шултăра çĕрулмисен тăрри лартма питех те лайăх вăрлăх пулни, çапла, ĕçре курăнчĕ. Лайăх, шултăра çĕрулмисен тăррисене лартсан çав сортах, анчах 40—50-шер грамм туртакан çĕрулмисене лартнинчен нумайрах çĕрулми пулни палăрчĕ. Касса илнĕ çĕрулми тăррисенчен йышлăрах, шултăрарах çĕрулми пулать тата çĕрулмин пахалăхĕ те лайăх пулать. Кунсăр пуçне, çĕрулми тăррине касса лартни вăл хуçалăхшăн та йÿне ÿкет.

Совет Союзĕнче 1942 çулта çĕрулми тăррисем лартнине пула çĕрулми лартнă çĕрĕн лаптăкĕ 100 пин гектар ÿснĕ. Халĕ ĕнтĕ татăклăн каламалла: 150—200 грамм йывăрĕш шултăра çĕрулмисенчен касса илнĕ 10—15 грамм туртакан тăрăсене лартсан — 40—50 грамм туртакан пĕтĕм (касман) çĕрулмисене лартнинчен ытларах çĕрулми пулать.

[illegible]

Акă, тĕслĕх. 1942 çулта ялхуçалăх наукисен В. И. Ленин ячĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри Академийĕн аспиранчĕ Л. В. Мосолова юлташ Тĕштырĕ хуçалăхĕн Сĕлĕрти тĕпчев институтĕнче çĕрулми тăррисене тĕрлĕрен касса лартса пăхнă. [illegible]

[illegible]

мĕнпурĕ те 40—50 килограмм çеç юлать. Çапла 80—100 килограмм çĕрулми тăрри (100 тонна шултăра çĕрулмирен касса пухнăскер) 5 центнер чи паха çĕрулми вăрлăхĕпе танлашать.

Çĕрулми тăррисене касса хăварас, вĕсене пăхса усрас тата лартса ÿстерес ĕçе анлăн туса пыма пуçлани пĕр çул çеç иртрĕ. Çав çул хушшинче ку ĕç ăнăçрĕ. Анчах агрономи ыйтăвĕсенче нумай чухне пĕр çулталăкри ĕçĕн опычĕ çителĕксĕр пулать. Малаллахи çулсенче çак ĕçĕн малтан курăнман çитменлĕхĕсем палăрма пултараççĕ. Çавăнпа та çĕрулми вăрлăхне хатĕрлес ĕçе халь çĕрулми тăррисене касса хатĕрленипе улăштарма юрамасть-ха. Колхозсемпе совхозсен, çавăн пекех рабочисемпе служащисен те 1943 çулта лартса тума çĕрулми вăрлăхне кирлĕ чухлĕ хатĕрлесе хумалла. Çĕрулмине планпа пăхнинчен нумайрах лартас тесе, çĕрулми тăррисене касса хатĕрлес пулать. Вăл ĕçе тума халех пуçламалла. Çимĕçе каякан çĕрулмисен тăррисене, çапла ĕнтĕ, вăрлăхлăх касса хăвармалла.

2. ÇĔРУЛМИ ТĂРРИСЕНЕ ХĂÇАН ТАТА МĔНЛЕ КАСМАЛЛА

Çĕрулмин тăррине ăна çимĕçре усă курма уйăрса парас умĕн подвалсемпе нÿхрепсенчех касса хăвармалла. Çакна яланах асра тытмалла: çĕрулми тăррине ăна çимĕçе яриччен 7—10 кунтан маларах касмалла мар. Тăррисене касса илнĕ çĕрулми нумай вăхăт выртма пултараймасть, вăл пăсăлма тытăнать.

Çĕрулмин тăррине касса хăварас ĕçĕн техники йывăр мар, анчах ăна тума пĕлни тата ĕçе хăнăхни кирлĕ. Тăрри вырăнне çĕрулмин аврăпа сыхăнакан пуçне (кăвапине) касса хăварнă тĕслĕхсем те пулкаланă тата пысăк çĕрулмисенчен тăррисене пĕчĕкрех, пĕчĕк çĕрулмисенчен пысăкрах касса хăварни те пулкаланă. Çавăнпа ĕçе пĕлсе туни кирлĕ. Шултăра çĕрулмисенчен тăррине пысăкрах, пĕчĕкрех çĕрулмисенчен—пĕчĕкрех касса хăвармалла. Çĕрулмин кăвапине мар, тăррине касса хăвармалла. 50 грамм туртакан çĕрулмисенчен тăррисене касса илме кирлĕ мар, 200—300 грамм туртакан пысăк çĕрулмисен тăррисене 20 грамм чухлĕ касса хăвармалла. Пĕр сăмахпа каласан, çĕрулми тăррисене çĕрулми йывăрĕшĕн 8—10 проценчĕ чухлĕ касса хăвармалла.

Пăсăлнă е пăсăлма пуçланă çĕрулмисен тăррисене касса хăварасран сыхланас пулать. Пăсăк çĕрулмин тăррисем ыттисене чир-чĕр ертеççĕ, çĕртеççĕ. Çавăнпа çĕрулми тăррисене касса хăварма уйрăм çынсене уйăрса лартас пулать, вĕсен ĕçе ответлăха туйса туса пымалла.

3. ÇĔРУЛМИ ТĂРРИСЕНЕ УСРАССИ

Çĕрулмин каснă тăррисене хранилищĕсенче, подвалсемпе тĕпсакайсенче 5—10 хут хушши 5—10 сантиметр хулăнăш хурса тытас пулать. [illegible]

4. 1943 ÇУЛТА ÇĔРУЛМИНЕ ПЛАНРАН ИРТТЕРСЕ ЛАРТАР

[illegible]

1942 çулта çак ĕçе тунă çĕрте комсомол организацийĕсем, [illegible]

[illegible]

Академик Т. ЛЫСЕНКО.

Укерчĕк çинче: Чкаловски районри «Правда» колхозăн сĕт-çу ферминчи стахановкăсем — дояркă Бену Начеева (сулахайри) тата пăру пăхакан Фахризан Идрисова.

Начеева юлташ хăй пăхакан ĕнесенчен 10 уйăх хушшинче планран иртттерсе 166-шар литр сĕт суса илнĕ. Идрисова юлташ—9 ĕнерен 9 пăру илсе пурне те сывă пăхса çитĕнтерне.

Планран иртттерсе 65 центнер йĕтĕн вăрри панă

ÇЕМЕРЛЕ, январĕн 5-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Район государствăна йĕтĕн вăрри памалли 1942 çулхи плана иртттерсе тултарчĕ. 347 центнер вырăнне 412 центнер йĕтĕн вăрри панă.

Уйрăм колхозсем государствăна йĕтĕн вăрри икĕ хут ытларах туса парчĕç. Тĕслĕхрен, «Искра» колхоз государствăна йĕтĕн вăрри 20 центнер памалла пулнă, вăл 43 центнер туса панă, «Комбайн» колхоз 8 центнер вырăнне 15 центнер, «Большевик» колхоз 7 центнер вырăнне 10 центнер йĕтĕн вăрри панă.

Х. ЛИСИН.

Вăрман ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтермелле

КАЛИНИНО. Районри чылай колхозсем чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрленĕ çĕрте лайăх ĕçлеççĕ. Вăрнар леспромхозĕн Пинерти участокĕнче ĕçлекенсем декабрĕн 23-мĕшĕ тĕлне вутă хатĕрлес плана 150 процент, турттарассине 160 процент, вагон çине тиессине 125 процент тултарчĕç.

Вутă хатĕрленĕ çĕрте районри колхозниксем пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартаççĕ. Д. Игнатьев (Сăкăтран), Н. Унтрицов (Юманайран), Е. Архипова (Туванайран) кулленхи ĕç нормисене 150—160-шар процент тултараççĕ. Вутă турттаракансем касакансенчен те хăвăртрах ĕçлеççĕ. Г. Михайлов (Хурăн Кăкшăмран), Е. Иванова (Ермошкинăран), Е. Султанов (Кÿльхĕрринчен), В. Кондратьев (Чалăм Кăкшăмран) вутă турттармалли заданисене 180—200 процент таран тултарнă.

Анчах та районри хăшпĕр колхоз председателĕсем вăрман хатĕрлес ĕç çине тимсĕррĕн пăхаççĕ. Тури Карачурари «Путь Ленина» колхоз председателĕ Титов, «Маяк» колхоз председателĕ Е. Михайлова юлташсем вăрман хатĕрлевне ĕç вăйĕ çителĕклĕ памаççĕ.

Вутă хатĕрлес ĕçре леспромхозран килекен çитменлĕхсем те пур. Леспромхоз вăрманта ĕçлекенсене тухăçлăн ĕçлеме кирлĕ условисем туса паман. Пăчкăсемпе пуртăсем мăка е юсавсăр. Пăчкă хăйракансем А. Вырсов, С. Тихонов ĕçе тĕплĕн тумаççĕ. Хăшпĕр бригадăсен пăчкисене 4—5 кун хушши хăйраман пирки мастерскойĕнче 15—20 çын пăчкă хăйраса парасса кĕтсе лараççĕ. Мастерской участокĕн начальникĕ В. Панкрашев юлташ çак çитменлĕхсене курса тăнă çинчех нимĕнле мера та йышăнмасть.

Бракерсем Н. Малова, Н. Бурашникова юлташсем те рабочисен ĕç пахалăхĕшĕн кĕрешмеççĕ. Ун вырăнне вĕсем вут хĕрне рабочисене пухаççĕ те, пушă халап çапса ик-виçĕ сехет ытла вăхăта сая яраççĕ, ĕçе ертсе пырас вырăнне унта-кунта çÿреççĕ.

Ку çеç те мар. Учетчиксем тата рабочисен ĕçне тĕрĕс шута илмеççĕ. Сăмахран, М. Алексеевпа В. Кондратьев рабочисем августăн 1-мĕшĕпе ноябрĕн 30-мĕшĕ хушшинче пурĕ 540 кубометр вутă турттарнă. Анчах учетчик Леонтьев 448 кубометр çеç турттарнă тесе шута илнĕ. Ыттисене вара шута илмесĕрех хăварнă. Çакăн пек çитменлĕхсене халех пĕтермелле.

С. ШАДИН,
С. КАШКИН.

Йĕлтĕрсене хамăр тăвар!

Кам пирĕнтен, çамрăксенчен, хĕлле, кăпăш юр выртсассăн, йĕлтĕрпе ярăнман пуль. Тепĕр чух пĕр-пĕр вырăна лашапа та, çуран та пыма май çук. Çав вырăна йĕлтĕрçĕ çăмăллăнах пырса тухать. Йĕлтĕр вăрçăра чи кирлĕ япала. Фронт пирĕнтен йĕлтĕрçĕсен кадрне ыйтать, эпир ăна пама тивĕçлĕ. Çавăнпа ĕнтĕ кашни çамрăкăн, чи малтан комсомолецăн, йĕлтĕрпе çÿреме вĕренмелле. Халиччен пек пушăлла, усăлла çÿремелле çеç мар, çурăм хыçне боеца кирлĕ чухлĕ япала чиксе, винтовка е автомат, гранатăсем илсе. Ку ĕнтĕ хăвна ху йывăрлатма мар, хăвăн ÿт-пĕвне хăнăхтарма кирлĕ. Йĕлтĕрçĕ-боец икĕ-виçĕ километр кăна мар, кирлĕ пулсан вуннă е темиçе вуншар километр шума пултармалла. Пирĕн комсомолпа профсоюзсен чылай организацийĕсем лайăх йĕлтĕрçĕ-боецсем хатĕрлессине чăрмантаракан сăлтава йĕлтĕрсем çитменнинче шыраççĕ. Таçтан инçетрен кам та пулин йĕлтĕрсем ярса парасса кĕтеççĕ. Анчах йĕлтĕре хамăрах тума пултаратпăр. Ун валли пирĕн пур майсем те пур. Пирĕн Чăваш республикинчи вăрмансенче юман, вĕрене, хурăн йывăçĕсем ÿсеççĕ. Кам та пулин кÿрсе парасса кĕтмесĕр, пур майсемпе пуринпе те туллин усă курса, йĕлтĕрсене хамăрăн тума тытăнас пулать. Йĕлтĕре кашни çамрăках, кашни комсомолецах тума пултарать. Ăна тума укçа-тенкĕ темĕн чухлĕ кирлĕ мар.

Кашни çамрăкăн, комсомолецăн «санăн йĕлтĕр çук пулсан, ăна ху ту, вырăнти майсемпе пуринпе те усă кур» тенине асра тытас пулать. Ху тунă йĕлтĕрсем фабрикăра туни пекех илемлĕ пулмасан та, ун пекех çăмăллăн шумасан та, вĕсем çапах та тренировкăсем тума, стройпа çÿренĕ чухнехи приемсене хăнăхма юрăхлă. Çавăн пекех йĕлтĕрсем тăвас ĕçре вырăнти промартельсемпе, леспромхозсемпе, фабрикăсемпе заводсен йывăç каскалакан цехĕсемпе усă курас пулать.

Чылай районсенчи комсомолецсем йĕлтĕр тăвас ĕçе хăйсем тытăнса, çак паха пуçарура аван тĕслĕхсем кăтартрĕç. Элĕк, Калинински, Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи çамрăксем пурĕ 350 мăшăр йĕлтĕр хăйсем тунă. Вăрнар районĕнчи Чупайри комсомолăн пуçламĕш организацийĕ 21 мăшăр туса хатĕрленĕ. Çав вăхăтрах Тăвай, Советски, Ишлей районĕсенче йĕлтĕре вырăнтах тума май пуррине ăнланман, ăнланасшăн та мар. Çак районсенче нумай комсомолецсен йĕлтĕрсем çук пулин те, мĕнпурĕ те 50—80 мăшăр йĕлтĕр çеç тунă. Çак районсенчи ВЛКСМ райкомĕн секретарĕсем (Яковлева, Семенова, Серебрякова) йĕлтĕр тăвасси çинчен нумайранпа калаççĕ, çапах та нимĕн те туман-ха. Йĕлтĕрсем тума тытăнманнин сăлтавне материалсем, инвентарьсем çитменнинче мар, комсомол организацийĕсем ку ĕнĕпе нимĕн те туманнинче шырамалла.

Кунсăр пуçне тата хатĕр йĕлтĕрсене пăхса усрама пĕлни те питĕ кирлĕ. Йĕлтĕрсене базăсенче вырттармалла мар, вĕсемпе яланах усă курмалла, куçса çÿрекен йĕлтĕр базисем тумалла.

Йĕлтĕрсене пур вырăнта та тумалла. Орденлă республикăн çамрăкĕсемпе комсомолецĕсен, йĕлтĕрçĕ-боецсем пулма массăллăн хатĕрленсе, Мари республикипе пирĕн хушăри ăмăртура малти вырăна тухма тăрăшмалла.

Г. ПЕТРУХИН,
ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ.



Укерчĕк çинче: Американсен «Генерал Стюарт» йышши танкĕсем [illegible] Египетра пĕр разведка тăрать. [illegible]



ДЕЙСТВУЮЩИ ХУРА ТИНĔС ФЛОЧĔ. Укерчĕк çинче: Н-ски карап çар грузĕ тиенĕ транспорта хÿтĕлесе пырать.

М. РЕДКИН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Çулпуçăн саламĕ хавхалантарчĕ

ЕЛЧĔК, январĕн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Паянхи кун тĕлне районри ĕççыннисем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 1.546.586 тенкĕ укçа пухрĕç. «Марс» колхоз членĕсем хăйсемех 300.000 тенкĕ пухнă. Вăл шутран колхоз председателĕ коммунист Абдул Гаязович Гаязов 50.000 тенкĕ панă. Кунсăр пуçне вăл Хĕрлĕ Çар фондне килти запасран 36 пăт тырă хывнă.

Н. ВОЛКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

КУКЕÇ, январĕн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ Чăваш республикинчи ĕççыннисене танксен колоннисене тума укçа пухнă ятпа саламлани районри колхозниксемпе колхозницăсене ку ĕçе вăйлатма хавхалантарчĕ. Январĕн 4-мĕшĕ тĕлне районри ĕççыннисем танксен колоннисене тума пĕтĕмпе 2.285.000 тенкĕ пухса укçине банка хывнă. Молотов ячĕпе тăракан колхоз кыççăн ку ĕçре «Туçи» тата «Первое мая» колхозсем 100.000-шер тенкĕ хывреç.

Сталин юлташ саламланă хыççăн «Строитель» колхоз çак ĕç валли татах 19.000 тенкĕ хывре. Танксен колоннисене тума укçа пухас ĕç вăйлансах пырать.

Т. ИГНАТЬЕВ,
Госбанкăн районри отделенин управляющийĕ.

Колхоз пĕтĕмпе те 1.500 тенкĕ çеç пухнă

Пирĕн хаçатра Хĕрлĕ Чутай районĕнче танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума укçа пухас ĕç сÿрĕккĕн пыни çинчен темиçе хутчен те палăртнăччĕ. Анчах район руководителĕсем ку ĕçе хăвăртлатма тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ-ха. ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Сергеев юлташ пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 1-мĕшĕ тĕлне районри ĕççыннисем çак ĕç валли 674 пин тенкĕ çеç укçа пухнă. Ку тĕлĕшпе малта пыракан «Коминтерн» колхоз 72.000 тенкĕ панă. Чкалов ячĕпе тăракан, «Трактор» колхозсем 45—40 пиншер тенкĕ пухнă. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Васильев юлташ çак ĕç валли 7.000 тенкĕ панă.

Танксен колоннисене тума укçа пухас ĕç районра сÿрĕккĕн пынин сăлтавĕ мĕнре тесе ыйтсан, Сергеев юлташ «начар ĕçлетпĕр» тесе ответлет. Чăнах та, «Прогресс», «Самолет» колхозсем çак ĕç валли пĕтĕмпе те 1.500-шер тенкĕ çеç пухнă. Асăннă колхозсенче уйрăм коммунистсем Упкатеновăпа Ларкин юлташсем ĕçлеççĕ. Анчах вĕсем халăхăн укçи-тенкине çимĕçрĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çара хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе çĕршывра пуçланнă патриотизмлă хăватлă движение колхозниксене явăçтарассишĕн тăрăшман.

Танксен колоннисене тума укçа пухас ĕçе вăйлатмалла. Массăллă-ăнлантару ĕçне анлăн туса пырса, районри кашни колхозникпа колхозницăна çак пархатарлă ĕçе явăçтармалла.

Боевой самолетсен „Комсомолец Чувашии“ ятлă эскадрильине тума

ЕТĔРНЕ, январĕн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри комсомол организацийĕсем Чкаловски районри «РОКК» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем Чăваш республикинчи комсомолецсемпе çамрăксене боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрильине тума укçа пухма чĕнсе каланине пысăк хавасăхпа кĕтсе илчĕç. Ку хыпара илтсенех ĕççынни депутачĕсен район Советĕнчи комсомолăн пуçламĕш организацийĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. «РОКК» колхоз çамрăкĕсен пуçарăвĕ çинчен сÿтсе-явнă хыççăн, ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ Зотыхина юлташ боевой самолетсен эскадрильине тума уйăхри ĕç укçине—600 тенкĕ пама пулчĕ. Унăн примерне организацири мĕнпур комсомолецсем йышăнса илчĕç. Боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрильине тума райплан председателĕ Гудерман юлташ та 1000 тенкĕ пачĕ.

Боевой самолетсен эскадрильине тума педучилищĕре вĕренекенсемпе комсомолецсем пĕр кун хушшинче 2.900 тенкĕ, призыв комиссине пынă çамрăксем 4.000 тенкĕ пухрĕç. Ку ĕç колхозсенче те пуçланчĕ.

А. КУЛИКОВА.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă тумтирсем

ШАХАСАН. (Телефонпа). Районри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли вăрçăн иккĕмĕш хĕлĕнче ăшă тумтирсемпе япаласем парас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем турĕç. Çĕнĕ çул тĕлне районра пурĕ 293 мăшăр çăмата, 481 килограмм çăм, 1907 тир, 95 кĕрĕк пиншак, 336 мăшăр алшишсемпе перчаткăсем, 158 носкисемпе ура тăлисем, 164 çĕлĕк, 433 мăшăр кĕпе-йĕм, алшăллисем, простынясем, одеялăсем тата ытти ăшă япаласем нумай пухса панă.

Ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе районра «Березовка» колхоз членĕсем уйрăмах лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем Сталин юлташăн 1942 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнчи доклачĕ хыççăн пĕр уйăх хушшинче 67 сурăх тирĕ, 10 килограмм çăм, 3 мăшăр çăмата, 10 мăшăр перчатка, 5 мулаххай тата ытти ăшă япаласем пухса пачĕç.

Н. МАТВЕЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чувашский обком РОКК и станция переливания крови организуют 9 января 1943 г. в Академическом театре

СЛЕТ ДОНОРОВ

Повестка дня:

1. Доклад на тему: «Донор в отечественной войне» — докладчик тов. Комиссарова.
2. Художественная часть—постановка «Парень из нашего города».

Начало в 7 часов вечера.

Билеты получить на станции переливания крови.

Обком РОКК и станция переливания крови.

Чебторгу требуются счетоводы-картотетчики и бухгалтера.

2—2

Издательству «Чăваш Коммуни» требуются: машинистка-радистка, курьеры, подчитчик, хорошо владеющий чувашским языком. Обращаться по адресу: г. Чебоксары, Дом печати, 3-й этаж, комн. 20.

К сведению руководителей и бухгалтеров хозяйственных и кооперативных организаций и предприятий.

Согласно инструкций НКФ СССР от 28/III — 1939 года за № 178/36 и от 14/VI—41 г. за № 504/75, все государственные, хозяйственные и кооперативные организации и предприятия гор. Чебоксары—плательщики налога с оборота и налога с нетоварных операций обязаны представить в Чебоксарский Горфо (сектор госдоходов) годовые отчеты за 1942 год по исчислению указанных выше платежей, не позднее сроков, установленных вышестоящими организациями для представления годовых балансов за 1912 г.

За непредставление или несвоевременное представление годовых налоговых отчетов руководители предприятий и лица, на которых возложена обязанность составлять и представлять налоговые отчеты, подлежат штрафу в размере до 100 руб. с каждого.

ЧЕБОКСАРСКИЙ ГОРФИНОТДЕЛ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 3. Дом печати. [illegible] редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 9—23.

Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 53 84 ц.

НТ 605